26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 23 ЮНКУН 129(6366) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Союзĕн отечественнăй вăрçин икĕ çулталăкĕ

(ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИКĔ ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ)

Гитлерла Германия пирĕн тăван çĕршыва ирсĕррĕн те ултавлăн тапăннă кунран вара икĕ çул иртрĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç икĕ çул хушши вăйлăн çапăçаççĕ. Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ вăйлă та хаяр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре йывăр тĕрĕслӳ витĕр тухрĕç. Пирĕн çĕршыври халăхсем, хăйсен тăван çĕршывĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе, питĕ пысăк çирĕплĕх, хастарлăх тата хăйсен пурнăçне шеллеменнине кăтартрĕç.

1941 çулта çулла фашистла Германия хăйĕн вăрçма пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ çарне, пиншер танксемпе, самолетсемпе хĕçпăшалланнă çарне пирĕн çĕршыва хирĕç ячĕ. Совет Союзĕ тăшмана сирсе ярас тĕлĕшпе вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче хăйĕн мĕнпур хăватлă вăйĕсемпе усă курма пултараймарĕ, мĕншĕн тесен çав вăйсене мобилизацилесе нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç яма вăхăт кирлĕ пулнă. Çитменнине тата пирĕн союзниксем ун чухне хĕçпăшалсене йышлăн туса кăларма пуçăннă çеç, вĕсем ун чухне Совет Союзне вăйлăн тата хăвăрт пулăшма пултарайман. Малтанхи çуллахи кампанире Хĕрлĕ Çарăн ĕçĕсем чылай ăнăçсăр пулчĕç. Анчах та вăл тăшман хĕссе килнине чăтса ирттерчĕ, оборонăра вăйлăн тăрса çапăçса, тăшманăн пысăк вăйĕсене халран ячĕ, пĕтерсе тăкрĕ. Малтанхи çуллахи кампани пĕтеспе нимĕçсен малалла тапăнса пырас хăвачĕ чылай хавшарĕ.

Нимĕçсем совет армийĕсене çиçĕмле хăвăрт аркатса тăкма шутлани, совет стройĕ çирĕп маррине, Хĕрлĕ Çар вăйсăррине шанса тăни мĕн тери тĕрĕс пулманни вăрçăн малтанхи уйăхĕсенчех палăрчĕ. Гитлеровецсем Совет Союзĕпе Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене пĕтерме шутлани те путланса ларчĕ. Вăхăт Германие хирĕç ĕçлерĕ. Совет Союзĕн вăйĕсем вăрçă пынă вăхăтра сарăлса, çирĕпленсе пычĕç. 1941—42 çулхи хĕл пуçланнă тĕле Хĕрлĕ Çар хăйĕн тĕп вăйĕсене мобилизацилесе çитерчĕ, кучухнехи вăрçа ертсе пырас тĕлĕшпе кирлĕ опыт туянчĕ, вара пуçарулăха хăйĕн аллине çавăрса илчĕ те тăшмана пысăк поражениссем тӳстерчĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕç войскисене Дон çинчи Ростов патĕнче, Тихвин патĕнче, Крымра тата Мускав патĕнче аркатса тăкрĕ, тăшманăн пирĕн столицăна çавăрса тытса илес планне путлантарса лартрĕ. Хĕрлĕ Çар Мускав патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен фашистла войскисене аркатса тăкни вăрçăн малтанхи çулĕнче ĕçе татса паракан событи пулса тăчĕ, çав вăхăтрах вăл нимĕçсен [illegible] Хĕрлĕ Çар [illegible] 1941—42 çулхи хĕлле Хĕрлĕ Çар нимĕçсене [illegible] вырăн-вырăнĕпе вĕсене 400 километра [illegible].

1942 çулхи çу уйăхĕсем пуçланнă тĕле нимĕçсем, Европăра иккĕмĕш фронт çуккине усă курса, хăйсен мĕнпур резервĕсене Совет Союзĕпе Германи фронтне куçарчĕç, çапла майпа вĕсем кăнтăрхĕвеланăç енче пирĕннисен нумай йышлăрах вăй пухса тăратрĕç. [illegible] нимĕçсем тактика тĕлĕшĕнче чылай пысăк ăнăçусем тӳсрĕç. Анчах Хĕрлĕ Çар [illegible] вăйлăн хирĕç тăчĕ, вĕсене Сталинград патĕнче тата Кавказ тăвĕсем умĕнче чарса лартса, [illegible] пурнăçа кĕртме май памарĕ.

1942—1943 çулта хĕлле Хĕрлĕ Çар нимĕçсен çуллахи вăхăтра тактика тĕлĕшпе тунă ăнăçусене пĕтĕмпех пĕтерсе лартрĕ. 1942—1943 çулхи хĕллехи кампани [illegible] Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче [illegible] Сталинград патĕнче [illegible] Ростов патĕнче, Тихвин патĕнче [illegible] Хĕрлĕ Çар [illegible] 600—700 километр аякка хăваласа ячĕ. Нимĕçсем 1942 çулхи çу вăхăтĕнче [illegible] офицерĕсен çĕршер пин виллине, персе çĕмĕрнĕ пиншер танксемпе, самолетсемпе [illegible]

Çапла ĕнтĕ, вăрçăн иккĕмĕш çулĕнче гитлеровецсем çĕнĕрен пысăк çухатусем тӳсрĕç, территори тĕлĕшĕнчен нимĕн те илеймерĕç. Ку çеç те мар, çав çулталăк хушшинче пирĕн войскăсем Ленинград таврашĕнчи блокадăна татрĕç, тăшмана вăрçă тĕлĕшĕнчен паха районĕсенчен—Курскран, Ржевран, Вязьмăран, Гжатскран, Великие Луки хулинчен, Демянскран хĕссе кăларчĕç.

Хĕллехи кампание нимĕçсен фашистла войскисене пысăк поражени тӳстерни Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнине, çапăçу хирĕсенче гитлерла çар машини аркани, çуклаланма тытăнни çухатусем тӳстерчĕ. Тăшман хăйĕн çарĕсене пĕтĕмпех пĕтсе ларасран çăлма пĕтĕм вăйран тăрăшрĕ. Гитлеровецсем Хĕрлĕ Çар войскисене пĕрле çапса нимӗçсене пĕтĕм Европăрие Хĕвеланăç Европăран 30 дивизи ытла илсе килчĕç. Çак çĕнĕ дивизисене усă курса, гитлеровецсем пирĕн Харьков патĕнче тăракан чаçсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкма шутлана, çапла майпа вĕсем вăрçă ĕçĕсене хăйсем майлă çавăрса яма шутланă. Анчах нимĕçсем çапла шутлани, кăна пурте пĕлеççĕ, путланса ларчĕ. Нимĕçсем Сталинградшăн тавăрма хăтланнине пирĕн войскăсем çапăçусенче сирсе пăрахрĕç.

Иртнĕ хĕлле чылай поражениссем тӳссе, нимĕçсен фашистла войскисем 1943 çулхи çуркунне, 1942 çулхи çуркуннехи пек мар, Хĕрлĕ Çара хирĕç наступленилле операцисем пуçласа яма пултараймарĕç.

Вăрçăн икĕ çулĕ хушшинчи çапăçусем вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк çухатусем тӳстерчĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕçсем тӳснĕ çухатусем Хĕрлĕ Çарăн çухатăвĕсемпе танлаштарсан мĕн тери пысăккине çак тĕрĕс даннăйсенчен курма пулать:

Германипе унăн союзникĕсен вăрçăн икĕ çулталăкĕ хушшинче, вилнисемпе тыткăна лекнисене шутласан, 6.400 пин салатакĕпе офицерĕ пĕтнĕ, вĕсем тĕрлĕ калибрлă 56.500 оруди, 42.400 танк, 43.000 самолет çухатнă.

Çав вăхăт хушшинче ССР Союзĕн 4.200 пин çын вилнĕ тата пĕр хыпарсăр çухалнă, тĕрлĕ калибрлă 35.000 оруди, 30.000 танк, 23.000 самолет пĕтнĕ.

Хăюллă совет партизанĕсем, халăхшăн геройла тавăракансем, нимĕç войскисене вăйлăн пыра-пыра çапрĕç. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче партизансен отрячĕсем, тăшман оккупациленĕ мĕнпур территори çинче активлăн кĕрешекенскерсем, 300.000 гитлерла мерзавеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 3.000 кая мар поездне сирпĕнтерсе янă, хĕçпăшалсемпе боеприпассен 895 складне сирпĕнтерсе тата çунтарса янă, чугунçулсемпе шоссе çулĕсем çинчи 3.263 кĕпере ишĕлтернĕ, тăшманăн нумай çĕршер танкĕсемпе бронемашинисене, самолечĕсемпе орудийĕсене, автомашинисене пĕтерсе тăкнă. Совет партизанĕсем хăйсен паттăр кĕрешĕвĕпе пирĕн войскăсене вăрçăра ăнăçу тума пулăшса пычĕç.

Вăрçă пынă вăхăтра нимĕçсем хăйсен кадрти дивизийĕсен тата хăйсен тĕрĕсленнĕ командирĕсемпе офицерĕсен составĕн, çавăн пекех çар техникин ытларахăш пайне çухатрĕç. Çав çар техникине нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăрассишĕн нумай çулсем хушши хатĕрлесе пухса пынă. Нимĕç войскисем çавăн пек çухатусем тӳсни гитлерла çар машинине тата гитлерла государствăна тĕпренех халсăрлатрĕç.

Çапла ĕнтĕ, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра икĕ çул хушши пынă çапăçусенче Германи империалисчĕсен Совет Союзĕнчи халăхсем поражени тӳсессине ĕмĕтленсе тунă авантюристла планĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларнĕç.

Вăрçă пынă май гитлерла Германин çарпа политика тĕлĕшĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ питех те начарланчĕ.

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем нумаях вăйсăрланни чи малтан çакăнтан курăнать: юлашки çул хушшинче нимĕçсен çарĕ вăрçăра мĕнле те пулин ăнăçусем тăваймарĕ, пачах та урăхла, вăрçăра унăн ĕçĕсем питех те ăнăçусăр пулчĕç, нимĕçсен çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра та, çавăн пекех тата Египетра та, Ливире те, Триполитанире те, Тунисра та умлăн-хыçлăнах поражениссем тӳссе пычĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен хăйсен „çиçĕмле вăрçин" шухăшне уççăнах сирсе яма, хăйсен вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи тĕп планĕсем пĕтĕмĕшпех тӳсĕмсĕр пулнине йышăнма тата вăрçă вăраха кайни çинчен куçкĕретех пĕлтерме лекрĕ, вĕсем ĕнтĕ хăйсем „позицилле вăрçăра" çĕнтересси çинчен сӳпĕлтетеççĕ. Нимĕçсен Германири юлашки арçынсене, çав шутрах çар ĕçне вĕренмен стариксемпе çитĕнсе çитмен çамрăксене çар службине илме лекрĕ, вĕсем оккупациленĕ çĕршывсенчи пур пек арçынсене: поляксене, французсене, бельгиецсене, датчансене, словаксене, чехсене тата ыттисене те ирĕксĕрлесе хăйсен çарне хăваласа пухаççĕ. Вăрçăн икĕ çулталăкĕ иртнĕ хыççăн нимĕçсен çарĕн çапăçури хастарлăхĕ тĕпренех хавшарĕ, çĕнтерес шанчăка ĕнтĕ халĕ чи сĕмсĕр гитлерла воякăсем те çĕр тĕпне пытараççĕ.

Çапла ĕнтĕ, вăрçăн икĕ çулталăкĕ хыççăн гитлерла Германин вăрçăри хăвачĕ тĕпренех хавшарĕ, нимĕçсен фашистла çарĕ вара пысăк кризиса кĕрсе ӳкрĕ.

Вăрçăн икĕ çулталăкĕ хушшинче фашистла Германин политикăллă лару-тăрăвĕ хыттăнах начарланчĕ, Гитлерăн тылĕ чылай хавшарĕ, халсăрланчĕ. Çавна ăна çакăнтан курма пулать: Германи халăхĕ хушшинче шанманлăхпа паникăллă шухăш-кăмăлсем ӳссе пыраççĕ, нимĕçсем Гитлерăн Германи войскисем Хĕвелтухăçĕнче çĕнтерӳсем туни çинчен калакан халлапĕсене ĕненме пăрахаççĕ. Фашистла пичетпе радио паникăна ӳкнĕ тата иккĕленме пуçланă нимĕçсене хыттăн айăплассипе ытларах та ытларах хăрataççĕ. Германия çын ресурсĕсем çитменнипе питех те аптăраса ӳкнĕ. Гитлеровецсем Европăри мĕнпур оккупациленĕ çĕршывсем тăрăх чурасем хыççăн хăваласа çӳреççĕ; нимĕç арçынĕсен йышĕ катастрофăлла чакса пынине витес тесе, гитлеровецсем Германие ютçĕршывсенчен миллионшар рабочисене хăваласа пухаççĕ. Германи промышленноçĕ нимĕçсен çарĕ фронтсенче вăрçă техникине çав тери нумайăн çухатнине витсе пыма ĕлкĕреймест. Çар промышленноçĕн производствăри хăвачĕ чакать, çав хăвата чакарнă çĕрте союзниксен авиацийĕ Германин промышленность центрĕсене пыра-пыра çапни сахал мар пулăшать. Çакăнпа пĕрлех гитлерла Германин Европăри тылĕ хăвăрттăн хавшаса, нимĕçсемшĕн ытларах та ытларах хăрушлăх кӳрекен пулса пырать. Европăн Германи çарĕсем оккупациленĕ çĕршывĕсенче—Югославире, Польшăра, Францире, Чехословакире, Бельгире, Голландире, Норвегире, Грецире халăх массисем ылханлă захватчиксене хирĕç хĕçпăшаллă кĕрешĕве çĕкленеççĕ. Ирĕклĕхе юратакан государствăсен çарĕсем туса пыракан вăрçă ĕçĕсем Гитлер чуралăха кĕртсе ӳкернĕ Европăри халăхсем нимĕçсен фашистла империалисчĕсене хирĕç туса пыракан хĕçпăшаллă кĕрешӳпе пĕрлешсе каяс сехет çывхарса килет.

Çапла ĕнтĕ, вăрçа пула фашистла Германин тылĕ тĕпренех хавшарĕ, Германин çар экономики нумай халсăрланчĕ, Европăн нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывĕсенче вара фашистла пусмăрçăсене хирĕç пĕтĕм халăх кĕрешĕвĕ сарăлса, хăватланса пырать.

Италипе Германи блокĕн тĕнчери лару-тăрăве те çавăн пекех нумай начарланчĕ. Çакна ăна çакăнтан курма пулать: Гитлерла Германия хăй енне çĕнĕ союзниксем явăçтарма пултараймарĕ кăна мар, çавăн пекех тата вăл хăйĕн хальхи союзникĕсем çине те шанса тăма пултараймасть. Вăрçăра тӳснĕ поражениссене пула гитлерла Германин хăйĕн союзникĕсем хушшинчи авторитечĕ чакрĕ. Пĕтĕм тĕнчери аренăра Германия пĕччен тăрса юлни ытларах та ытларах палăрса, ӳссе пырать. Гитлерла Германия хăй юнлă агрессор пулса тăнине пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларчĕ, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем фашистла ирсĕрсене кураймасăр тăракан пулчĕç.

Нимĕçсен фашистла империалисчĕсем, хăйсем пуçарса янă вăрçă хăвăрт тата ăнăçлă пĕтес шанчăка çухатса, ирĕклĕхе юратакан нацисен фронтне мир çинчен сӳпĕлтетнипе аркатса яма хăтланса пăхрĕç. Паллă ĕнтĕ, нимĕçсен çак ултавлă планĕ намăсла путланса ларчĕ, çав план вăл ирĕклĕхе юратакан государствăсен союзĕн иксĕлми çирĕплĕхĕ çине пырса тăрăнса саланса кайрĕ.

Çапла ĕнтĕ, вăрçă пынă вăхăтра фашистла Германия пĕтĕм тĕнчери аренăра пĕччен тăрса юлни ытларах ӳсрĕ, нимĕçсем Гитлера хирĕçле коалицире хирĕçӳсем пуçланса каясси çине шанни пĕтсе ларчĕ, фашистла государствăсен союзĕ вара пусĕпех саланса каясси умĕнче тăрать.

Çаксем ĕнтĕ вĕсем вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăру гитлерла Германишĕн ăнăçлă мар пулса тăни çинчен, тăшман лагерĕнчи йывăр кризис кĕретĕнех куç умне тухса тăни çинчен калаççĕ.

Гитлерла Германин лару-тăрăвĕ питех те начарланнă вăхăтра, Совет Союзĕн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ çирĕпленчĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕн вăрçăри хăвачĕ ӳсрĕ, Хĕрлĕ Çар тăшманшăн аçа-çиçĕм пек хаяр вăй пулса тăчĕ. Хĕрлĕ Çар çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленчĕ, пуян вăрçă опычĕ туянчĕ, хăйĕн речĕсене вăрçăн çĕнĕ условийĕсем ыйтнă пек урăхлатса çĕнетсе йĕркелерĕ. Совет командирĕсем çĕнĕ, çаврăнăçуллă тактикăн—маневр тактикин мастерĕсем пулса тăчĕç. Совет войскисем хăйсемшĕн ăнăçлăн вĕçленĕ нумай йывăр çапăçусем Хĕрлĕ Çарăн стратегийĕпе тактики нимĕçсен мухтаса пĕтернĕ стратегийĕпе тактикинчен малта тăнине кăтартса пачĕç. Хĕрлĕ Çарăн халĕ ĕнтĕ чăннипех те кучухнехи вăхăта тивĕçлĕ хăватлă çар техники пур. Пирĕн войскăсен çапăçури шухăш-кăмăлĕпе хастарлăхĕ татах та ытларах ӳссе çирĕпленчĕ. Тăшмана чылай çĕрте çĕнтернипе хавхаланнă Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăка пусĕпех пĕтерсе тăкас ĕмĕтпе çунса тăрать.

Çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çарăн тылĕ малалла çирĕпленсе пычĕ. Совет фабрикисемпе завочĕсем мĕнпур хăвачĕсемпе ĕçлеççĕ, вĕсем пирĕн çара мĕн кирлине пурне те парса тăраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче ĕççыннисем хуçалăха халиччен курман кĕске сроксенче вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕç, хăрушлăхра тăракан районсенчен промышленноçа Хĕвелтухăçнелле куçарса вырнаçтарчĕç, промышленноçăн çĕршер предприятийĕсене çĕнĕрен туса лартрĕç, пур пек тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе боеприпассем туса кăларассине ӳстерчĕç. Колхоз хресченĕсем акмалли çĕр лаптăкĕсене анлăлатрĕç, вĕсем вăйлă тыр пулшăн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ, çарпа тăван çĕршыва ытлăн-çитлĕн продовольстви парса тăраççĕ. Совет халăхĕн пĕрлĕхĕ халĕ ĕнтĕ нихăçанхи пек мар çирĕп. Иккĕмĕш вăрçă заемне пĕр талăк хушшинчех ирттерсе сарни тата çакă вăл бюджета 20 миллиард тенкĕ ытла кӳни пирĕн халăхăн ылханлă захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешӳри патриотла аслă çĕкленĕвне кăтартса паракан демонстраци пулса тăчĕ, çакă ĕнтĕ вăл совет çыннисем тăшмана хирĕç татăклă çĕнтерӳ тăвичченӗх кĕрешме хатĕр тăнине кăтартса парать. Халăх массисем хăйсен тăван çĕршывне хӳтĕлес ĕçе, Отечественнăй Аслă вăрçă кунĕсенчи пек, хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр хутшăнни иртнĕ вăхăтри историйĕн мĕнпур тăршшĕнче те пулман.

Çаксем ĕнтĕ вĕсем Хĕрлĕ Çар çирĕпленни çинчен, совет тылĕ вара иксĕлми çирĕп те тĕреклĕ пулни çинчен калаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче çавăн пекех тата Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ те çирĕпленчĕ. Вăрçă пынă май тĕнчери аслă государствăсен—ССР Союзĕпе Англин тата США-н Гитлера хирĕçле хăватлă коалицийĕ пулса тăчĕ. Гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕр каварлисене хирĕç туса пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлесси çинчен Англипе ССР Союзĕ хушшинче договор тунăранпа çулталăк ытла иртрĕ. Вăрçă условийĕсенче çав договор мĕн чухлĕ çирĕппине тĕрĕслемелĕх срок çителĕклĕ. Пурнăç çакна кăтартса пачĕ: вăрçă вăхăтĕнче Англипе тытакан пирĕн союзлă çыхăнусем лайăхланчĕç. Агрессие хирĕç вăрçă вăрçнă çĕрте пĕр-пĕрне пулăшмалли принципсем çинчен 1942 çулхи июнь уйăхĕнче ССР Союзĕпе США хушшинче тунă килĕшӳ те хăйĕн пурнăçлă вăйне пĕтĕмĕшпех кăтартса пачĕ. Гитлерла Германин тĕп вăйĕсене хăй çинелле туртса илсе, Хĕвелтухăçĕнче нимĕçсен 200 дивизине тата вĕсен союзникĕсен 30 дивизине çыхса тăратса, Совет Союзĕ хăйĕн союзникĕсене калама çук пысăк пулăшу пачĕ, вĕсене хĕçпăшал туса кăларассине сарса яма, миллионшар çынсене мобилизацилесе хăватлă çарсем тума май пачĕ. Пирĕн союзниксем хăйсем енчен совет халăхне хĕçпăшалсемпе материалсем тĕлĕшĕнчен ытларах та ытларах пулăшу парса тăраççĕ. Юлашки уйăхсем хушшинче Гитлера хирĕçле государствăсен союзĕ Италипе Германи фашисчĕсене хирĕç пĕр вăхăтрах пĕрле çапăçса пырса çирĕпленчĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене хĕвелтухăçĕнчен хăватлăн пыра-пыра çапни пирĕн союзниксем Çурçĕр Африкăра Италипе Германи çарĕсене аркатмаллах пырса çапнипе пĕрлешрĕ. Çав вăхăтрах союзниксен авиацийĕ Германипе Италие ытларах та ытларах туйтармалла пыра-пыра çапать.

Çаксем пурте ĕнтĕ пирĕн тăван çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕ халĕ ĕнтĕ нихăçанхи пек мар çирĕппи çинчен тата вăрçă пынă май ССР Союзĕпе Англи тата США хушшинчи боевой союз татах та ытларах тĕреклени çинчен калаççĕ.

Çапла ĕнтĕ отечественнăй вăрçăн икĕ çулталăкĕ хушшинче кучухнехи вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче гитлерла Германин халиччен пулнă çар хăватне хавшатнă, нимĕçсен фашистла çарĕн вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи малашнехи ĕçĕсем питех те начарланчĕç. Çакăнпа пĕрлех, Совет Союзĕн тата унпа туслă союзлă государствăсен вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчи позицийĕсем малалла çирĕпленчĕç, ирĕклĕхе юратакан халăхсен çарĕсем ӳссе тĕрекленчĕç, вĕсен кĕрешӳри туслăхĕ ытларах пĕтĕçрĕ.

Анчах та совет халăхĕне Хĕрлĕ Çар тăшманăн вăйĕсене тата малашнехи кĕрешĕвĕн йывăрлăхĕсене пĕчĕклетсе кăтартмаççĕ. Малашне йывăр çапăçусем, пысăк испытанисем пулаççĕ-ха. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерес тесен, хамăрăн мĕнпур вăйсене хуни тата тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте хурçă пек çирĕп пулни кирлĕ. Тăшман темĕнле „тотальнăй мобилизацисем" туса хăтлансан та, совет халăхĕ хăйĕн тĕрĕслĕхлĕ ĕçĕ çĕнтерессине шанса тăрать. Вăйсен шайĕ мĕнле пулни вăрçă пынă май пирĕншĕн тата пирĕн союзниксемшĕн ăнăçлă пулса улшăнчĕ. Анчах та çĕнтерӳ тума çакă çителĕксĕр-ха. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм ĕç пирĕн союзниксем Европа континенчĕ çинче иккĕмĕш фронт уçма ăнăçлă обстановка пулса тăнине мĕнле усă курнинчен килет, мĕншĕн тесен иккĕмĕш фронтсăр гитлерла Германие çĕнтерме çук.

Европăра иккĕмĕш фронт пулманни гитлерла Германие 1942 çулта поражени тӳсессинчен çăлса хăварчĕ. Паллă ĕнтĕ, çав вăхăтпа гитлеровецсем Совет Союзне хирĕç иртнĕ çулхи çулла тата кĕркунне çĕнĕрен анлă наступлени тăвас ĕçре усă курчĕç. Европăра 1943 çулта иккĕмĕш фронт уçма ăнăçлă условисем пулса тăнине вĕçертни, çак ĕçре кая юлни—пирĕн пĕрлĕхлĕ ĕçе пысăк сиен кӳни пулать. Европăра фашистла Германие хирĕç иккĕмĕш фронт уçассине кая хăварса пыни вăрçа вăраха ярасси патне, çапла вара—çухатусене çавтери ӳстерсе ярасси патне илсе пынă пулĕччĕ, пачах та урăхла, Европăра кăçалхи çул иккĕмĕш фронт организацилени вăрçа хăвăртрах вĕçлесси патне илсе пынă пулĕччĕ,—çапла вара Гитлера хирĕçле коалицин çухатăвĕсене калама çук сахаллатнă пулĕччĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Паян утă çулма тухаççĕ

Утă çулма тухас вăхăт çитрĕ. Утă паха пултăр тесен, ăна питĕ кĕске вăхăтра çулса пухмалла.

Çавна асра тытса, Етĕрне районĕнчи хăшпĕр колхозсем паян утă çулма тухаççĕ. Уйрăмăнах Буденный ячĕпе тăракан, „XVII Партс"езд", Ворошилов ячĕпе тăракан тата „Путь социализма" колхозсем ку ĕçе лайăх хатĕрленсе çитрĕç. Вĕсем тахçанах косилкăсене юсаса лартнă, çавасене мĕнчул кирлине пĕтĕмпех туптаттарнă. Кашни колхозăн утă çулса пухса кĕртес ĕçĕн планĕ хатĕр. Хăçан çулса пĕтермелли тата хăш бригадăн миçе гектар çулмалли паллă. Фронта тухса кайнă арçынсем вырăнне кăçал ку ĕçе нумайтарах хĕрарăмсемпе çамрăксем хутшăнаççĕ.

Районра пур колхозсемшĕн те лапатка хатĕрлесси йывăр пулчĕ, анчах çӳлте асăннă колхозсем ку йывăрлăхран тухрĕç темелле, мĕншĕн тесен вĕсем ятарласах Мари республикине кайса, çĕнĕ лапаткасем туянса килчĕç. Çав вăхăтрах пĕлтĕрхи лапаткасемпе те усă кураççĕ.

Июнĕн 25-мĕшĕнче массăллăн утă çулма тухаççĕ.

М. Хмелев,
Райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ.

Çĕртме сухине хăвăртрах тумалла

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсем утă çулма тухиччен çĕртме сухине туса пĕтерме тăрăшаççĕ. «Чăваш ЦИК» тата «Парижская Коммуна» колхозсем çĕртме туса пĕтерчĕç ĕнтĕ.

Çав вăхăтрах «Новая сила», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красная звезда» колхозсем ку ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Çавăн пек колхозсем çĕртме тăвас ĕçре района каялла сĕтĕреççĕ. План тăрăх районĕпе 3.000 гектар çĕртме сухи тумалла пулсан, халĕ 2.450 гектар кăна сухаланă-ха.

Çулйĕр уйăхлăхĕн юлашки кунĕсенче

Çулйĕр уйăхлăхĕн юлашки кунĕсем юлчĕç. Чылай колхозсем кулленхи графика ытлашшипех пултарса пыра пуçларĕç. Комсомольски, Первомайски, Елчĕк районĕсем уйăхри задание июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçлаççĕ. Çĕмĕрле районĕнче те ĕç лайăхланчĕ. Кашни колхозранах çул юсама массăллăн тухаççĕ. Елчĕк районĕнче çул çинче плана кулленех çуран 671 çын, 193 лаша ĕçлемелле, июнĕн 21-мĕшĕ тĕлне кунта 876 çын, 288 лаша ĕçленĕ. Елчĕк районĕ уйăхлăхри задание паянах ырана пурнăçлать.

Уйăхлăхра Сĕнтĕрвăрри, Улатăр, Пăрачкав районĕсем халĕ те юлса пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕн çулйĕр юсама 153 лаша уйăрмалла пулнă пулсан, паянхи куна çул çинче унта 4 лаша кăна ĕçлет.

Улатăр районĕнче çулйĕр ĕçĕнче 191 çын ĕçлес вырăнне июнĕн 21-мĕшĕнчен 46 çын кăна ĕçлесе пынă.

Тепĕр 7 кунтан уйăхлăх вĕçленет, анчах республика уйăхлăх графикне 50 процента яхăн çеç пурнăçланă-ха. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕн председателĕсен юлнă вăхăтпа туллин усă курса, çак уйăхлăхри задание пĕтĕмĕшпех пурнăçлама тăрăшмалла.

Ĕçре малта пыракансем— комсомол ретне

Комсомолăн Çĕнĕ-Шелттемри (Канаш р.) пуçламĕш организацийĕ кăçал колхоз çамрăкĕсем хушшинче агитаци ĕçне кирлĕ пек туса пыракан пулчĕ.

Ахальтен мар юлашки вăхăтра колхоз производствинче палăрса ĕçлекен çамрăксем комсомол ретне йышăнас кĕме пуçларĕç. Хĕл касиччен кунти организацие çĕнĕрен 19 çамрăк хутшăнчĕ. Вĕсем пурте комсомол ретĕнче Ленин—Сталин ĕçĕшĕн ялан ырми-канми кĕрешме пулчĕç. Çавăн пекех Çĕнĕ-Шелттем ялĕпе кӳршĕри Ямашкассинчи комсомол организацийĕ те колхоз çамрăкĕсем хушшинче тимлĕн ĕçлесе хăйĕн йышне ӳстерме тăрăшать.

И. МАКСИМОВ

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 21-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 21-мӗшӗнче фронтра палӑрӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Пирӗн авиаци Хура тинӗсре тӑшман транспортне путарнӑ.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнче пирӗн чаçсем гитлеровецсене пӗр ротӑна çити вӗлерсе тӑкнӑ. Пӗр чаçри артиллеристсем тӑшманӑн миномет батарейине пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшман пехотин темиçе ушкӑнне саланса янӑ.

* * *

Сумы районӗнче пирӗн подразделенисем 150 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 2 дзочӗпе 3 блиндажне ишӗлтерсе антарнӑ. Пӗр чаçри боецсем гитлеровецсен разведка тӑвакан ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ, икӗ пулемет, автоматсем тата винтовкӑсем тытса илнӗ.

Пӗр районра нимӗç самолечӗсем вут тивертекен бомбӑсем пӑрахнӑ. Темиçе бомба боеприпассен шарщанӗ çине ӳкнӗ. Склад начальникӗ — гвардин старши техник-лейтенанчӗ Гавриленко юлташ, хӑй вилесрен хӑрамасӑр, шарщан çине сиксе хӑпарнӑ та çунакан бомбӑсене кӗреçепе илсе çӗре пӑрахнӑ. Çапла вӑл боеприпассене çуралса каймa паман.

* * *

Белгород районӗнче кӗрешекен зенитчиксен чаçӗ пӗр уйӑх хушшинче 20 нимӗç самолетне персе ӳкернӗ. Лейтенант Еровский юлташ командир пулса тӑракан подразделенири зенитчиксем çав вӑхӑтра тӑшманӑн 4 бомбардировщикӗпе 2 истребительне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хӗвеланӑçнерехре пӗр-пӗрин çине хутран-ситрен персе тӑнӑ. Пӗр соединенири гвардеец-минометчиксем нимӗç салтакӗсене пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ, икӗ блиндажа ишӗлтерсе антарнӑ тата тӑшманӑн миномечӗсен темиçе батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Волхов фронтӗнче пирӗн чаçсем нимӗçсен 8 дзочӗпе 5 блиндажне ишӗлтерсе антарнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, тӑшманӑн чугунçул çинчи эшелонне вут тивертнӗ. Пӗр участокра пирӗн боецсем нимӗç оборонин малти хӗррине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та тӑшманӑн 5 дзотне вӗсен гарнизонӗсемпе пӗрлех сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Партизансен Михаил Коцюбинский ячӗпе тӑракан отрячӗ июнӗн 12-мӗшӗнче Полтава облаçӗнчи пӗр чугунçул станцине тапӑннӑ. Нимӗç хуралçисем хирӗç тӑнине сӗнтерсе тӑкса, совет патриочӗсем çав станцие йышӑнса илнӗ, 2 кӗпере, мӗнпур стрелкӑсене сирпӗнтерсе янӑ, тӑшманӑн склачӗсене çунтарса янӑ. Украинӑри партизансен тепӗр отрячӗ июнӗн 14-мӗшӗнче кӗтмен çӗртен нимӗç помещикӗн именине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Партизансем 269 пуç мӑйракаллӑ шултӑра выльӑх, 30 сысна, 40 лаша тата тӗштырӑ нумай тытса илнӗ те вырӑнти халӑха валеçсе панӑ. Тепӗр кунне партизансен ушкӑнӗ шоссе çинче нимӗçсен 3 автомашинине сирпӗнтерсе янӑ, тӑшманӑн 2 салтакӗпе 3 офицерне вӗлернӗ.

* * *

Нимӗçсен 82-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Çар енне куçнӑ салтак Эрнст Л. çапла каласа панӑ: «Хӗвелтухӑç фронтӗнче нимӗç çарӗ çав тери пысӑк çухатусем тӳснӗ пирки, халь ӗнтӗ çар предприятийӗсенче ӗçлекен рабочисене те мобилизацилерӗç. Нимӗç рабочийӗсем вырӑнне ют çӗршывсенчен илсе килнӗ рабочисене тӑратрӗç. Халӗ нумай заводсенче çавӑн пек рабочисем нимӗç рабочийӗсенчен 3—5 хут ытларах. Ют çӗршывсенчен илсе килнӗ рабочисем яланах саботаж тунӑ, анчах та ӑна вӗсем питех те сыхланса туса пынӑ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем çав енӗпе чылай хӑюллӑрах ӗçлеççӗ. Акӑлчан авиацийӗ Штутгарта тапӑннӑ чухне итальянецсемпе французсем тревога пуçлансанах пӗр çар заводӗнче завод оборудованине пӑсса пӑрахнӑ. Машинӑсем тӑвакан заводра ют çӗршыв рабочийӗсем союзниксен самолечӗсем пӑрахнӑ бомбӑсене пула тухнӑ пушарсене сӳнтерме пачах та килӗшмен. Тепӗр заводра итальянецсем 4 кун забастовка тунӑ. Вара администрацин вӗсем ыйтнине ирӗксӗрех килӗшмелле пулнӑ. Юлашки вӑхӑтра нацистсем уççӑнах çапла калаççӗ: ют çӗршыв рабочийӗсен кашни утӑмнех асӑрхаса пырас пулать, мӗншӗн тесен вӗсем пурте Германи тӑшманӗсем, вӗсем кашни минутӑрах ӑна çурӑмран çӗçӗпе чикме хатӗр, теççӗ».

Пушар дружини ӗçлемест

ТАВАЙ. Тӗмер ялсоветӗнчи ирӗклӗ пушар дружини начар ӗçлет. Дружина начальникӗ Абрамов хӑйӗн ӗçне тивӗçлипе туса пымасть. Пушар инвентарӗсем ӑçта çитнӗ унта выртса çӳреççӗ. Вышка çинче яланах дежурнӑй тӑмалла, анчах унта нихӑçан та улӑхса тӑмаççӗ. Тӗмер ялӗ пысӑк ял, анчах паянхи куна çитсе те пӗвесем пӗвелемен, колхозниксен килӗсем умӗнче те шыв та, хӑйӑр та çук. Урамра никам та хурал тӑмасть. Пушар дружинин ӗçне çирӗплетнӗ лашасемпе Абрамов ӗçкӗсене, нимене çӳрет. Пушар дружини начар ӗçленине ялсовет исполкомӗпе колхоз правленийӗ те лайӑх пӗлсе тӑраççӗ, Çапах та ун пирки нимӗнле мерӑ та йышӑнмаççӗ.

Г. КОТЯКОВ.

Районсенчи парти пухӑвӗсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ

Районри коммунистсем ВКП(б) Обкомӗн XV-мӗш пленумӗн итогӗсене сӳтсе явнӑ. Çураки итогӗсемпе уборкӑна хатӗрленсе ирттерес ӗçри задачӑсем çинчен ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Н. Григорьев юлташ доклад туса панӑ.

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи пысӑк йывӑрлӑхсене пӗлсе, районри колхозсем кӑçал тырпул никӗсне начар мар хывса хӑварнӑ. Акас плана 103 процент тултарнӑ. Оборона фондне хывма 280 гектар акнӑ. Районри колхозсем Кувакино, Кусламка районӗсенчи колхозсене 100 тоннӑна яхӑн вӑрлӑх парса пулӑшнӑ. Сталин юлташӑн приказӗпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницӑсем фронта ытларах пулӑшас шухӑш-кӑмӑлпа ӗçлеççӗ. Ӗçе тӗрӗс организацилени пула, хальччен юлса пынӑ «Победа», «Малалла», «Коминтерн», «Красная Чувашия» колхозсем кӑçал малтисен ретне тӑчӗç. «Красная Чувашия» колхоз председателӗ М. Мефодьев юлташ çуракин ӗçӗсене уйрӑмах лайӑх организациленӗ, ӑна халӗ парти ретне илнӗ.

Çакӑнпа пӗрлех район махорка акас тӗллевне юлса пырать. Халӗ те 61 гектар махорка лартса пӗтереймен-ха. «12 лет Октября», «Новый мир», «Четай» колхозсем ку тӗллевпе уйрӑмах юлса пыраççӗ.

Уборкӑна хатӗрленес ӗçре питех те пысӑк çитменлӗхсем пур. Хӑшпӗр колхозниксемпе ялсовет исполкомӗсен председателӗсем «çуракине начар мар ирттертӗмӗр-ха» тесе; лӑпланса пурӑнаççӗ. Албахтинӑри «Сила» колхоз (председателӗ коммунист Павлов); Кушар ялсоветӗнчи «Свобода», «Большевик», Янкас ялсоветӗнчи «Волга» колхозсем уборка машинисене тивӗçлипе юсама тытӑнман-ха. Райçӗрçӗ пайӗ, çавӑн пекех райсовет исполкомӗ те, колхозсене уборкӑна хатӗрленме ӗçлӗн пулӑшса пыни çук-ха.

МТС çураки планне 134 процент тултарнӑ. Пысӑк çитӗнӳ тунӑ. Анчах çакӑ вӑл пӗрре те тунӑ çитӗнӳсемпе лӑпланса лармаллине пӗлтермест. МТС работникӗсем лӑпланса ларнӑ, 12 комбайнран пӗр комбайнне тата 4 комбайнӑн моторне çеç юсанӑ.

Районӑн çум çумлас, çӗртме тӑвас ӗçсене хӑвӑртлатмалла. Июнӗн 20-мӗшӗ тӗлне çӗртме планне 33 процента яхӑн çеç тултарнӑ. «Байга», «Трактор» колхозсем халӗ те çӗртме сухине тумаң-ха.

Докладчик агитациллӗ-массӑллӑ ӗçри çитӗнӳсемпе çитменлӗхсем çинчен те каласа кӑтартрӗ. Янчеклӗ, Тӗрер, Упи ялсоветӗсенчи колхозсенче агитколлективсем пултаруллӑн ӗçлеççӗ. Янчеклӗри агитколлектив членӗсем — учительсем Абрамов, Васильев, Семенов, Васильева юлташсем колхозниксемпе пӗрле уйра ӗçлеççӗ, хаçатсенчи çӗнӗ хыпарсене вуласа параççӗ, каласа кӑтартаççӗ. Вӗсем колхозниксене Горшиха тата Осипцево колхоз членӗсен пуçарӑвӗ çинчен ӑнлантарса панӑ. Ун хыççӑн оборона фондне хывма 14 гектар тырӑ акнӑ, ирӗке каларнӑ колхозсене пулӑшма 11 сысна çури, 6 сурӑх, 4 пулех, 30 чӑх ӳстерсе пама обязательство илнӗ.

Анчах районри агитколлективсен ӗçе чылай вӑйлатмалла-ха. парти кабинечӗн хӑйӗн ӗçне ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн агитацишпе пропаганда Управленийӗ хушнӑ пек сӗнетсе йӗркелемелле.

Район 1943 çулта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана, пӗтӗмӗшпе илсен, тултарнӑ. Анчах 96 колхозран 63 колхозӗ мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем ӗрчетмелли плана пурнӑçа кӗртмен; Чылай колхозсенче выльӑхсен продуктивносӗ пӗчӗккӗ. Выльӑхсем валли сӗтеклӗ апат—силос хатӗрлесси вӑраххӑн пырать. Район силос хывма пуçӑнман та темелле.

Пухура пурӗ 17 çын тухса каларӗç. Вӗсем колхозсен ӗçӗнчи çитменлӗхсене уçса парӗçрӗç, тимсӗр руководительсене критикӑларӗç.

Пуху районри коммунистсене ВКП(б) Обкомӗн XV-мӗш пленумӗн решенийӗсене пурнӑçа кӗртессишӗн большевикла кӗрешме хушса хӑварчӗ.

С. ШАДИН.

ШӐХАСАН

Иртнӗ вырсарникун пулса иртнӗ парти пухӑвӗнче районри коммунистсем ВКП(б) Обкомӗн XV-мӗш пленумӗн решенийӗсене сӳтсе яврӗç.

Докладчик — парти райкомӗн секретарӗ М. Кузьмин юлташ çакна палӑртрӗ: районри колхозсем кӑçал çуракине иртнӗ çулхинчен лайӑхрах хатӗрленсе тухнӑ, кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа ирттернӗ. Тельман, Куйбышев, Киров ячӗсемпе тӑракан, «Заря», «Красный партизан» колхозсем çуракинче уйрӑмах лайӑх ӗçленӗ. Район çураки планне 103,8 процент тултарнӑ. Планран ирттерсе 303 гектар клевер акнӑ, 599 гектар çӗрулми лартнӑ. Горшиха колхозникӗсен пуçарӑвне йышӑнса, нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозсене пулӑшма тата оборона фондне хывма 352 гектар тырӑ акса хӑварнӑ.

МТС çураки ӗçсен планне, çемçе суха çине куçарса шутласан, 162 процент пурнӑçа кӗртнӗ. Социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарнипе МТС-ри 90 тракториcтран 72-шӗ сезонри плана ирттерсе тултарнӑ. МТС 4,287 килограмм горючи перерасходлани.

Çуракине ӑнӑçлӑн ирттернӗ пулин те район ретсем хушшинче ӗçлессипе çум çумлас, ирхи çӗртме тӑвас тата уборкӑна хатӗрленес тӗллевпе çителӗксӗр ӗçлет-ха. Июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне районри колхозсем çӗртме планне 37 процент çеç пурнӑçланӑ. Ку ӗçре лашасемпе тивӗçлипе усӑ курмаççӗ, тракторсем йӗркеллӗ ӗçлемеççӗ. Тракторсен вӑйӗпе 4,100 гектар çӗртме тумалла пулсан, паянхи кун тӗлне пурӗ, те 800 гектар ытларах çеç тунӑ.

Уборка машинисене вӑраххӑн юсаççӗ. 145 жнейкӑран 57-шне, 41 лобогрейкӑран 14-шне, 24 сеялкӑран 24-шне çеç юсанӑ. Кӗрешлеллӗ çавасем хатӗрлес тӗлӗшпе те район пачах çителӗксӗр ӗçлет.

Докладчик тата прение тухса калакан юлташсем те асӑннӑ çитменлӗхсем районри коммунистсемпе пуçламӑш парторганизацисем уборка умӗнхи ӗçсене кирлӗ пек ертсе пыманнинчен килсе тухнӑ тесе палӑртрӗç.

Агитациллӗ-массӑллӑ ӗç юлашки вӑхӑтра сӳрӗкленни сисӗнет. Хӑшпӗр агитколлективсем витӗмлӗ те пахалӑхлӑ агитацийӗн хальхи вӑхӑт ыйтнӑ пек кӗрешни çук-ха.

Район выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе хӑшпӗр çитӗнӳсем тунӑ. 1943 çулта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсемсӗр пуçне, пур выльӑхсем енӗпе те пурнӑçа кӗртнӗ. Анчах выльӑхсене пӑхса усрас ӗçре; уйрӑмах çамрӑк выльӑхсене çитӗнтерес ӗçре пысӑк çитменлӗхсем пур; Мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем ӗрчетмелли плана тултарман пулин те, чылай колхозсенче пӑрусем контрактацилеме тытӑнман.

Доклад хыççӑн 18 çын тухса каларӗç.

Пуху йышӑннӑ решенире ВКП(б) Обкомӗн XV-мӗш пленумӗн решенийӗсене хӑвӑртрах пурнӑçа кӗртмелли майсене палӑртса хӑварнӑ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Фронтовой вунӑкунлӑха кӑтартуллӑн ирттерер

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ чугунçул валли вутӑ хатӗрлесе турттармалли çур çулхи плана пурнӑçа кӗртес тӗллевпе июнӗн 20-мӗшӗнчен пуçласа июлӗн 1-мӗшне çитиччен фронтовой вунӑкунлӑх ирттерме йышӑннӑ.

Вунӑкунлӑхӑн малтанхи кунӗсенчех Элӗк, Ишлей, Сӗнтӗрвӑрри районӗсем ӗçе организованно тытӑнчӗç. Канаш районӗнчи Шмидт ячӗпе тӑракан колхозран фронтовой вунӑкунлӑха 250 çынна яхӑн хутшӑннӑ, вӗсенчен 120-шӗ лашасемпе ӗçлеççӗ. «Хӗрлӗ хӗм», «Мотор», Чкалов тата Дорошин ячӗсемпе тӑракан колхозсем çак ответлӑ ӗçре малта пыраççӗ.

Çак кунсенче вутӑ хатӗрлес çӗрте ӗç тухӑçлӑхне вӑйлӑн ӳстермелле. Кашни вӑрман касакан е турттаракан задание пурнӑçламасӑр ӗçрен таврӑнмалла мар. Пӗччен мар-виçӗ çыннӑн ӗçлемелле! Çапла хушать пире Сталин юлташӑн майӑн пӗрремӗшӗнчи приказӗ.

Вунӑкунлӑхра ӗçлекен рабочисемпе работницӑсем хушшинче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе сарса ямалла. Вӑрманта ӗçлекен кашни бригадӑрах каласусем ирттерме, хаçатсем вулаcа пама агитаторсем пулмалла. Ӗçре социализмлӑ ӑмӑрту тӗп вырӑн йышӑнса тӑмалла.

Вунӑкунлӑхра фронтри пек ӗçлесе, чугунçул транспорчӗ валли çителӗклӗ вутӑ хатӗрлер, вутӑ хатӗрлес ӗçӗн çур çулхи планне ӑнӑçлӑн пурнӑçлар.

Çур çулхи плана срокчен пурнӑçларӗ

ВАРМАР. Спорт инвентарӗсем тӑвакан фабрика иккӗмӗш квартал планне июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне 137,5 процент, çур çулхи плана 121 процент пурнӑçларӗ. Ку ӗçре пире рабочисемпе работницӑсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарни пулӑшрӗ. Фабрикӑра ӑмӑртӑва пӗр çын юлмиччен хутшӑнса, кашниех задание пӗр-пӗринчен ытларах тултарма тӑрӑшса ӗçлеççӗ.

М. Андреева, Е. Семенова, С Терентьева, М. Егорова юлташсем июнь уйӑхӗнче кулленхи задание 200—220 процент таран тултарса ӗçлерӗç. Нумаях пулмасть ФЗО шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ А. Кондратьева, М Павлова çамрӑк работницӑсем те задание ытлашшипех тултарса ӗçлеççӗ.

И. ГОРБУНОВ,
Фабрика директорӗ.

ВУЛАВ ÇУРЧӖ ӐÇТА?

ЭЛӖК. Хирлепуçӗнчи вулав çурчӗ ӑçта вырнаçнине хӑшпӗр колхозниксем халӗ те пӗлмеççӗ-ха. Малтан вӑл «Красный Октябрь» колхозӑн клубӗнчеччӗ. Унта колхозниксем культурӑллӑ канаймаң, мӗншӗн тесен вулав çуртӗн пӗр шкафсӑр пуçне нимӗн те пулман. Унтан ӑна ялсовет канцелярине куçарчӗç, анчах унта та унӑн ӗçӗ палӑрмасть.

Вулав çурчӗн заведующийӗ Е. Васильева культурӑллӑ-массӑллӑ ӗçе пачах туса пымасть. Стена хаçачӗсем кӑларассине нихӑçан колхозра та организацилемен. Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсене колхозниксен пухӑвӗсенче кӑна вуласа параççӗ. Докладсемпе каласусем Васильева вулав çурчӗн заведующийне нихӗрене пӗрре те пулман.

Вулав çурчӗ çителӗксӗр ӗçленни çинчен ялсовечӗ те чунсӑррӑн пӑхать, райӗнри çутӗç пайӗ те вӑл тӗлӗшпе нимӗн те тумасть.

М. КУСТИКОВ.

Хӗрлӗ Хӗрес обществисен халӑх сывлӑхӗшӗн тӑрӑшмалла

Отечественнӑй вӑрçӑ Хӗрлӗ Хӗрес тата Хӗрлӗ Çурҫӑйӑх обществисене хӑйсен ӗçне урӑхлатма хушрӗ. Çак обществӑсем хӑйсен умне квалификациллӗ медицина сестрисемпе дружинницисем хатӗрлес, Хӗрлӗ Çар боецӗсемпе командирӗсен пурнӑçне çӑлма юн паракан донорсем хатӗрлес задача лартаççӗ. Кунсӑр пуçне вӗсен халӑхӑн анлӑ сийӗсене хӑйсене тата урӑх çынсене медицина пулӑшӑвӗ пама хатӗрлесе çитермелле, сывлӑха сыхлас енӗпе ӗçлекен органсене яланах пулӑшса тӑмалла. Кашни предприятие, колхоза, совхоза, кашни çурта санитари оборонин крепоçӗ туса хурассишӗн тӑрӑшмалла. Çак задачӑсене тӗплӗн пурнӑçлас тесен, Хӗрлӗ Хӗрес обществин комитечӗсен сывлӑха сыхлав органӗсемпе таччӑн çыхӑнса ӗçлемелле, халӑх пултарулӑхне организацилеме пӗлмелле.

Чылай районсенчи Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Çурҫӑйӑх организацийӗсене пултарулӑ, çав ӗçе халӑхӑн анлӑ массисене явӑçтарма пултаракан çынсем ертсе пыраççӗ. Хӗрлӗ Хӗресӗн Чкаловски, Çӗмӗрле, Сӗнтӗрвӑрри тата ытти районсенчи комитечӗсем ӗçе кирлӗ пек туса пыраççӗ, вӗсем халӑха санитари оборонине вӗрентсе хатӗрлеççӗ, актива санитариллӗ-профилактикӑллӑ ӗçе явӑçтарнӑ, хӑйсен участокӗсене таса тытас, вӗсенче вар-хырӑм чирӗпе чирлессинчен сыхланас ӗçе туса ирттернӗ. Анчах пур районсенчи комитетсем те мар-ха çакӑн пек ӗçлеççӗ. Сӑмахран, Вӑрмар (председателӗ Журавлева) Калинински (Григорьева), Комсомольски районсенчи Хӗрлӗ Хӗрес комитечӗсем начар ӗçлеççӗ.

Хальхи вӑхӑтра çав ӗçлте асӑннӑ ӗçсене çеç туса пыни сахал. Кашни предприятире, кашни шкулта; колхозра, совхозра, МТС-ра Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Çурҫӑйӑхӑн пуçламӑш организацийӗсене тумалла, Хӗрлӗ Хӗрес обществин кашни членне санитари активӗ пулма хатӗрлесе çитермелле. Вӗсене тырра ӗçлекен ӗçсыннисен сывлӑхне çирӗплетессишӗн кӗрешме вӗрентсе хатӗрлемелле. Колхозниксенчен, шкул ачисенчен ГСО, БГСО значкисчӗсем хатӗрлемелле.

Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Çурҫӑйӑхӑн активисчӗсемпе медицина работникӗсенчен вӑрçӑ вӑхӑтӗ тылра та фронтри пекех ӗçлеме ыйтать. Вӗсен халӑх нумай пухӑнакан вырӑнсене ача сачӗсемпе площадкисене тасалӑх енчен кулленех сӑнаса тӑмалла. Хӗрлӗ Хӗрес обществин членӗсем медицина работникӗсене трахомӑна, кӗçӗ чирне пӗтерес ӗçре, ерекен чирлӗ çынсем пирки вӑхӑтра мерӑсем йышӑнас ӗçре пулӑшмалла. Колхозниксем уйра ӗçленӗ чух вӗсене кӑтартуллӑ медицина пулӑшӑвӗ парассине организацилемелле.

Çакӑн пек задачӑсем тӑраççӗ Хӗрлӗ Хӗреспе, Хӗрлӗ Çурҫӑйӑх обществисем тата сывлӑха сыхлав органӗсем умӗнче. Вӗсене пурнӑçламасӑр хӑварма юрамасть. Пирӗн Хӗрлӗ Çар ретӗнчи юлташсем хӑйсен çӗршыв умӗнчи тивӗçлӗхне хӑйсене шеллемесӗр пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ. Пирӗн те тылри халӑхӑн тасалӑхӗшӗн, унӑн сывлӑхне çирӗплетессишӗн çине тӑрса ӗçлемелле.

Т. КЛЕМЕТЬЕВА.

Ют çӗршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙӖН ӖÇӖСЕМ

ЛОНДОН, июнӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Акӑлчан авиацийӗ Пуа аэродромне (Франция) хаярран вӗçсе пырса тапӑннӑ. Ытти соединенисем тӑшманӑн товар турттаракан пилӗк суднине тата пӗр минӑй тральщикне сиенленӗ.

Вӑтаçӗр тинӗç бассейнӗнче Хӗвеланӑç Италири чугунçул объекчӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Тинӗс авиацийӗ Сицилин хӗвелтухӑç сыранӗ хӗррипче ишсе çӳрекен тӑшманӑн торпедлӑ кимӗсемпе суднисене атакӑланӑ.

Союзниксен бомбардировочнӑй авиацийӗ июнӗн 20-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле Сицили çине темиçе хут хаяррӑн вӗçсе пырса тапӑннӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тӑшманӑн 16 истребительне персе ӳкернӗ.

Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, юлашки эрне хушшинче тӗнӗл держависен тӗрлӗ фронтсенче пурӗ 108 самолет пӗтнӗ, союзниксен 63 самолет пӗтнӗ.

АНГЛИ КОРОЛӖ ГИБРАЛТАРА ПЫНӐ

ЛОНДОН, июнӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Гибралтара Англи королӗ пынӑ. Король Англин Гибралтарти хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующийӗ Макфарлан генерал кӗтсе илнӗ. Король оборона сооруженийӗсене тата гарнизон войскисене пӑхса тухса кӑтартусем панӑ.

ПАНТЕЛЛЕРИ УТРАВӖ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, июнӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонӑн радио Пантеллери хулине ним юлми ишсе пӗтерни çинчен пӗлтерет. Пур çӗрте те, итальянецсемпе нимӗçсен çӗмӗрсе пӗтернӗ самолет ванчӑкӗсем йӑваланса выртаççӗ. Портран нимӗн те юлман. Пӗтӗм утрав çинче танксене чарақан пӗр сооружени те, пӗр мина та пулман. Доксенчи орудисене нумайӗшне нимӗн сиенлемесӗрех пӑрахса хӑварнӑ. Итальянецсем вӗсемпе союзниксен флотне пеме шухӑшламӑ пӗрре палӑрмасть. Пеме хатӗрлесе хунӑ 6 дюймлӑ орудисен батарейисем пӗр снаряд та кӑларса яман. Итали салтакӗсем вӑрçӑ хастарлӑхне палӑртман. Вӗсем выçӑ, ывӑнса çитнӗ, начарланса кайнӑ. Тытӑнса илнӗ салтаксен ушкӑнӗ хула урамӗпе пынӑ чухне пӗр салтак сасартӑк стройран сиксе тухнӑ та çӗрте йӑваланса выртакан Муссолини сӑнне урисемпе таптама пуçланӑ; Çакна ытти салтаксем ырланӑ.

ГИТЛЕР ВАССАЛӖСЕМ ПӖР-ПЕРИНПЕ ТУЛЛАШАÇÇӖ

СТАМБУЛ, июнӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС). Румынипе Венгри хушшинчи харкашу çаплах пӗтмест. Румыни хаçачӗсем Венгрие айӑплаççӗ, эсир Çурçӗр Трансильванине пиртен «ним тивӗççӗр турт-са илтӗр»; Трансильванири румынсене хӗсӗрлесе пурӑнатӑр, теççӗ. Венгри пичечӗ те хӑй енчен Румыние тӑрӑхсах вӑрçать.

Юлашки кунсенче Румыни официозӗ «Универсул», Çурçӗр Трансильвани тӗлӗшпе тӑракан ыйтӑва çӗнӗрен тапратса ярса, темиçе статья пичетлесе кӑларнӑ. «Венгрисем Румыние яланах хӗсӗрлесе пурӑннӑ», «тӗрӗслӗхе ӗмӗрех пусарса пынипе Румыния нихӑçан та килӗшес çук; тесе çырать вӑл.

Нумаях пулмасть Венгрире Гальди ятлӑ профессорӑн кӗнеки пичетленсе тухнӑ. Вӑл унта: «Хӑшпӗр Румыни просветителӗсемпе поэчӗсем Венгри культурине пула анчах хӑйсен пултарулӑхне аталантарса пыма пултарнӑ», тесе çырать. Юлашки вӑхӑтра Будапештра тухнӑ кӗнекере, «Венгерец писателӗсен пурнӑçӗпе пултарулӑхӗ» ятлӑскерте, Венгри писателӗсен шутне Трансильванирен тухнӑ 20 румын писателӗсене те кӗртнӗ.

Венгри хаçачӗ «Пестер Ллойд» пӗлтернӗ тӑрӑх, Венгрире темиçе румына шпион ӗçӗпе айӑпласа арестленӗ те суд умне тӑратнӑ.

Ответлӑ редакторӑн
заместителӗ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Хусанти В. И. Ульянов-Ленин ячӗпе тӑракан Государство Университечӗ 1943—44-мӗш вӗренӳ çулӗ валли студентсем илесси çинчен пӗлтерет.

Студентсене çак факультетсен 1-мӗш курсне илеççӗ: 1) физикӑпа математика, 2) хими, 3) биологи, 4) геологие тӑпрасен, 5) историпе филологи, 6) географи факультачӗсен 1-мӗш курсне. Пур факультетсенче те 5 çул вӗренмелле.

Университета вӗренме кӗмелли условисем ытти аслӑ шкулсене вӗренме кӗмеллисем пекех.

Студентсем валли Университетӑн общижити тата столовӑй пур.

Заявленипе документсене çак адреспа ямалла: Хусан хули, Чернышевский урамӗ, 18-мӗш номерлӗ çурт, Госуниверситет.

2—2

Хусанти Юридически Институт 1-мӗш курса студентсем илесси çинчен пӗлтерет.

Институт суд, прокуратура, арбитраж, адвокатура органӗсенче тата Юстици халӑх комиссарначӗсенче ӗçлеме пысӑк квалификациллӗ юристсем хатӗрлет.

Институтӑн хӑйне уйрӑм столовӑй тата подсобнӑй хуçалӑх пур. Ытти вырӑнсенчен килнӗ студентсем валли общежити пур.

Институт адресӗ çапла: Хусан хули Дзержинский урамӗ, 22-мӗш номерлӗ çурт, приемнӑй комисси.

2—2

Фронтри тӗлпулусем

ТУПА

Тӑратпӑр вӑрманта, сип-симӗс
Хир-чӑрӑшсен чӑтлӑхӗнче.
Таçта перкеленет-ха нимӗç,
Кӗрлеççӗ тупӑсем инçе.

Тин çеç ку вӑрмана тасатнӑ
Эпир ылханлӑ нимӗçрен.
Кӑштах пулсан та, пафӑм татнӑн
Хавасланса утса çӳрен.

Çапӑçса илнӗ çӗр. — Пӗлетни
Мӗн пек вӑл хаклӑ чӗреме!
Мӗн пек телей — хӑв ирӗклетнӗ
Çӗр талки тӑрӑх çӳреме!

Манпала çуммӑн утса пычӗ
Пӗр автоматчик. Ним чӗнмест.
Чӑвашӑн евӗр сӑнӗ-питчӗ.
Хӑй ман çинчен куçне илмест.

Мӗн пулчӗ—тетӗп,—куç илмесӗр
Пӑхатӑр эсӗр ман çине?
— Каçарӑр; Уйӑп мар-и эсӗр?
Асилтеретӗр ун сӑнне, —

Тесе ыйтайрӗ те именчӗ.
— Куçкӗретех сире курман,
Кунта курассине кӗтменччӗ,
Кӗнекери сӑнӑр пур ман.

Паллашрӑмӑр. Тӑван пек çывӑх
Хамӑр енчи çын инçетре.
Çывӑх çынсем, Чӑваш çӗршывӗ
Килчӗç çумма çав сехетре.

Пирӗн тавра кӗç кӗпӗрленчӗç
Красноармеецсем пырса
Алран алла çӳрерӗ енчӗк,
Чӗлӗмсем чӗртрӗмӗр ларса.

Кунта иккен чӑвашсем йышлӑ
Тӑвана хурнӑн кашниншех
Эпӗ паллашатӑп ӳмлӑ-хыçлӑ,
Тӗл пултӑмӑр ӗлӗкхи пек.

Пӗрле-çке çапӑçатпӑр, тетпӗр,
Тӑван çӗршывшӑн! Пит аван
Шупашкара аса илетпӗр:
Унта пурте пӗре тӑван...

Асӑмӑрта Атӑл инçетӗ,
Çӳллӗ сыран. Шур пӑрахут...
Унта-çке эпӗр çитӗнсеттӗ
Çитсе курасчӗ пӗрех хут!

Çуралнӑ çӗр! Епле вӑл хаклӑ
Чӗресене! Анчах пӗлен:
Эс вӑрçӑра: Вӑрçа — пӑсаклӑ:
Ситсе курма та, тен, пӳрмен...

Ана пӗлетпӗр-çке, ачсемӗр,
Вӑл эп-и шулӑп, е тепри?!
Халӑхра юлӗç ыр ятсемӗр,
Кань парӗ тӑван çӗр тӑпри...

Вӑл шухӑша сирет пӗр шанчӑк:
Çӗнтерӳ пулӗ пирӗнте!
Çӗршыв хушать: пӗр утӑм ан чак!
Шав малалла çеç пирӗн, тет...

Боецсем тилмӗрме пуçларӗç:
— Вӑрнар вӑрманӗсем çинчен
Çырнӑ сӑвва вуласа пар эс. —
Теса ыйтаççӗ пур енчен.

«Мӗншӗн-ха вӑл сӑвва?» ыйтатӑп
Эп хам ӑшра. Сиксе тӑрса,
«Çурçӗр сӑввисене» пуçлатӑп,
Вӑрман тӑрӑх янраттарса.

«...Вӗçеççӗ шухӑшӑмсем манӑн
Тӑван çӗршывӑн уйхирне
Асра кашлать Вӑрнар вӑрманӗ,
Куратӑп эп чӑваш хӗрне

«Чӑваш юррисем янӑраççӗ
Ман чӗрере... Шеп-çке вӗсем!
Вӑраннӑ халӑхӑм, санра-çке
Эп чи юратнӑ кӗвӗсем!

...Салам, телейлӗ ӗçчен халӑх
Инçетри ывӑлусенчен!
Хӑватлӑ, ниçӗлми вӑйхалӗ
Сан ӗмӗр чӗрӗ. вӗсенче!..»

Пит шухӑша кайса итлеççӗ
Тӑван сӑвва ман боецсем.
Куран: ӑшшӑн аса илеççӗ
Çуралнӑ çӗршывне вӗсем.

Нихçанхинчен ытла туяç тӑр
Çак самантра: ӑçтан, епле
Çав çӗршывра мур нимӗç аста
Уттӑр юнлӑ алтипеле?

Епле кил-çуртсене çунтартӑр,
Çынсене ятӑр кӗлмӗçе?
Тӑвансене асаплантартӑр...
Кам ирӗк парӗ нимӗçе?

Епле вӑл ирсӗр выльӑх, йытӑ,
Тӗнче курман пӳтсӗр, тискер,
Сан чуп савнийӗ патне пытӑр
Мӑнкӑл тумашкӑн, пӗтесскер?

Мӗнле чунпа эс ирӗк парӑн
Унта асма çав çӗлене?
Эп куртӑм боецсен хаяррӑн
Тӑвӑлса çитнӗ çиллине.

Çав инкеке кам тӳсе тӑрӗ?
Итленӗ чух тӑван сӑвва,
Эп куртӑм, вутлӑ куçсем тӑрӑх-
Кашни ӑнра тупа тӑвать:

«Нихçан та; нихӑçан та пусмӗ
Ман çӗр çине тӑшман ури.
Ман халӑх ун мӑшкӑлне тӳсмӗ,
Ман килӗм пулмӗ ун хурри.

«Нихçан та ман чун савнӑ тусӑм
Ан пултӑр выльӑх фриц кулли.
Эп чакмӑп каялла пӗр пусӑм,
Пӗр ял ун пулмӗ, пӗр хули.

«Арасланса тӑрать вӑйхалӑм
Ӑна туçайрас çук тӑшман.
Алра хӑватлӑ хӗçпӑшалӑм,
Чӗрем тулли хаярлӑх ман.

«Пур халӑхсен тӑванла йышӗ
Çак пирӗн аслӑ çӗр çинче
Телейлӗ, ирӗк пурнассишӗн
Эп вӑрçӑп чунӑм пухиччен.

«Эп тӑшмана чӗррӗн ирттермӗп,
Юлашки фриц юлмиччен
Хӗçпӑшала алран ӳкермӗп,
Чӗрем çапла шухма чӗнет...»

Кашниййӗн куçӗнче вуларӑм,
Эп куртӑм çак сӑмахсене.
Çӗршывшӑн тав-сӑмах каларӑм
Çапӑçу паттӑрӗсене.

— Тӑвансене çырса пӗлтер эс,
Пире шанса тӑччӑр вӗсем,
Çӗнтерӳпе çеç килӗпӗр, — терӗç
Фронтри чӑваш ывӑлӗсем.

— Пӗлтерӗп,—терӗм. Сунтӑм сывлӑх
Хам тӑван халӑх ячӗпе. —
Шанатӑп, — терӗм, — Атӑл ывӑлӗ
Çӗнӳпе таврӑнӗ, чипер...

Çапла тӗлпулу пулчӗ симӗç
Хыр-чӑрӑшлӑх чӑтлӑхӗнче.
Пемешкӗн чарӑнмарӗ нимӗç
Чарӑнас çук пӑчланиччен!

Çулсем Анӑçалла выртаççӗ,
Çапӑçусем пулӗç пӗрӳ.
Чунсем шав малалла туртаççӗ;
Малта пӗр ӗмӗт: çӗнтерӳ!

УЙАП МИШШИ

Мускав, 1943 ç

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑç пайӗн—3—99, промышленноçпа ялхуçалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. — Заказ №2. Ф. 6. 53.84 п. л.

НХ 4883